36-32

ШКУЛ АЧИСЕН БИБЛИОТЕКИ

М. ГОРЬКИЙ

# ЙАНВАРĔН 9-МĔШĔ

ЧĂВАШИЗДАТ ★ ШУПАШКАР ★ 1936

ШКУЛ АЧИСЕН БИБЛИОТЕКИ

*КЛАÇÇИКСЕМ*

М. ГОРЬКИЙ

# ЙАНВАРĔН 9-МĔШĔ

*С. Ф-па Ф. Д. Ишетер куçарнă*

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
Шупашкар 1 9 3 6

*ВĂТАМ ÇУЛХИСЕМ ВАЛЬЛЬИ*

...Халăх тинĕсĕн кĕркуннехи малтанхи çилтăвăл тапхăрĕ кăшт çеç вăратса йанă хура хумĕ пек туйăннă; вăл малала хуллен йухнă; çынсен кăвак пичĕсем кăпăкла-пăтранчăк хум тăрри пек пулнă.

Куççем йăлтăр-йалтăр йăлтăртатнă, анчах çынĕсем пĕр-пĕрин çине хăйсем сăмах тытнине ĕненмен пек, хăйсенчен хăйсем тĕлĕннĕ пек пăхнă. Сăмахсем, пĕчĕк кăвак кайăксем пек, халăх çинче йавăнса тăнă.

Пĕр-пĕрин умĕнче тӳрре тухма тăрăшнă пек, шăппăн, ним кулмасăр калаçнă.

— Урăх тӳсме май çук, акă мĕншĕн тухрăмăр...

— Ахалех халăх тапранмасӗ...

— «Вăл»[1] ăна тăнланса илмĕ-и вара?..— тенĕ.

Пуринчен ытла «ун» çинчен калаçнă,— «вăл» ырă, ăшă кăмăллăскер—тăнланса илĕ, пурне те тăнланса илĕ,—тенĕ пĕр-пĕрне... Анчах «ун» сăнне ӳкернĕ сăмахсенче сăр-

[1] „Вăл“, „ун“, „унăн“ тесе пур çĕртре те патша çинчен каланă. *Куçаракансем.*

сем пулман. «Ун» ҫинчен нихҫан та лайăххăн шухăшламанни, ăна пурăнакан чĕрĕ ҫын пек шутламанни сисĕннĕ, «вăл» мĕн тума кирлине, мĕн тума пултарассине те лайăххăн ăнланман. Анчах ҫак кун «вăл» кирлĕ пулнă, пурте «вăл» мĕнлине тăнласа илме васканă, чăннипе мĕнлескер пулнине пĕлмесĕр, ирĕксĕрех хăйсен шухăшĕсенче темле пысăкскер туса хунă. Шанчăксем пысăк пулнă, вĕсен тĕреклĕхĕ ваҗҗи те пысăкскер кирлĕ пулнă.

Вăхăчĕпе халăх хушшинче чăрсăр ҫын сасси илтĕннĕ.

— Йулташсем! Ан ултаlăр хăвăра хăвăр...—тенĕ.

Анчах хăйсене хăйсем ултаlани кирлĕ пулнă, ҫавăнпа та халăх хăракаласа, ҫиленсе тăрук-тăрук кăшкăрнисем ҫын сассине хупла-хупла лартнă.

— Епĕр уҫҫăн тăвас тетпĕр...

— Ан чĕн есĕ...

— Ҫитменнине Гапон атте...

— Вăл пĕлет мĕн тумалине...

Халăх ушкăн-ушкăнăн уйăрăлса, ни кайас, ни кайас мар пек, урам варринче ҫапăнкаласа тăнă; тавлашса та калаҫкаласа сĕрленĕ, пўрт ҫтеписем ҫумне пыра-пыра тĕртĕн-

нĕ, унтан каллех хура шĕвĕ йапала пек урам варрипе йуха-йуха тулнă—халăх хушшинче иккеленнĕ шухăшсем кăшт палăрмала çеç çавăрăнса çӳрени сисĕннĕ; теме, пурне те кирлĕскере пит хытă кĕтни паллă пулнă, çав кĕтекен йапала вара çитес тĕлĕн çулне ĕç ăнассине ĕненнипе çутатмала пулнă, вăл ĕненни вара пур татăксене те шăратса пĕр çирĕп йаштака йапала туса çыхăнтармала пулнă. Мĕне ĕненменнине пытарма тăрăшнă, анчах пултарайман. Халăх ытла пысăккăн хусканса кайни, темшĕн пăшăрханни, сасчӳсене темле ытла питĕ сиссе тăни палăрнă. Утса пынă чух сыхланса итлекеленĕ, малала пăха-пăха илнĕ, куçĕсемпе темскере хытă шыранă. Хăй тулашĕнчи вăйа мар, хăй ăшĕнчи вăйне ĕненекенсен сассисем халăха хăратса, çилентерсе йанă, хăй курасшăн пулнă вăйпала куç-кĕретĕн тытăçма тивĕçлине ĕненекен çыншăн çав хăрани, çиленнисем пĕре те килĕшмен.

Анчах, урамран урама йухса, халăх пит хăвăрт нумайланса пынă. Çав тулашĕнчен ӳсни йерипен шалта ӳснине сисĕнтернĕ, чура халăхĕн хăй нушине власа астутарма тивĕç пурри çинчен шухăшлаттарнă.

— Кирек мĕнле пулсан та, епĕр те çынсемех...

— «Вăл» тăнланса илет пулĕ-çке,—епĕр ыйтатпăр.

— Тăнланса илме кирлĕ!.. Пăлханмастпăр епĕр...

— Тата Гапон атте те...

— Йулташсем! Ирĕке ыйтса илмеççĕ...

— Ах, туршăн та!..

— Чарăн-ха есĕ!..

— Хăвалăр ăна, усала, айаккала!..

— Гапон атте лайăхрах пĕлет мĕн тумалине...

Хура паљтолă çӳлĕ çын, хулпуççийĕнче хĕрлĕрех саплăклăскер, йупа çине хăпарса тăнă та, кукша пуçĕнчен çĕлĕкне хывса, хыттăн, чаплăн калама тытăннă. Куçĕсем вут пек йăлтăртатнă, сасси чĕтренĕ. Вăл «ун» çинчен, патша çинчен каланă.

Анчах сăмаххисенче те, йепле каланинче те малтан темле йури çĕкленсе калани сисĕннĕ, ун сăмаххинче ыттисене йерме пултаракан, хăватсемпех туса йаракан шухăш илтĕнмен. Тахçанах чĕрĕ шутĕнчен тухнă, вăхăт киветсе пăрахнă сăнсăр йапалана тепĕр хут чĕртсе аса илме хăтланса, çын хăйне

хăй ирĕксĕрленĕ пек пулнă. «Вăл» йаланах пĕтĕм ĕмĕр тăрăшшипех çынтан айакра тăнă, анчах халĕ кирлĕ пулса ларнă—ун ăшне çын хăй шанчăкĕсене кўртесшĕн пулнă.

Çав шанчăксем вилĕскере хуллен-хулленех вилĕмрен чĕртсе пынă. Халăх лайăх итлесе тăнă—çын хăй сăмаххисенче халăх ĕмĕчĕсене каланă, халăх ăна сиснĕ. Анчах «ун» вăйне йумахри пек шутлани «ун» сăнсăпачĕпе пĕртте килĕшмен пулсан та, пурте ун пек вăй пуррине, пулма кирлине пĕлнĕ. Çав вăйа хăвăртрах шыраса тупас пулнă—ораттăр ăна кăлентарсенчи картинсем тăрăх пурте пĕлекен çын пек туса хунă, йумахсем тăрăх пĕлекен сăнпа пĕрлештернĕ, йумахсенче çав сăн етемлех пулнă. Ораттăрăн хытă йантăракан ăнланмала сăмаххисем парăнтаракан, ырă, тĕрĕс тăвакан, халăх нушине ашшĕ-амăшĕ пек астăвакан çын сăнне ăнланмала ўкернĕ.

Ĕненў киле пуçланă, çынсене ыталанă, кăшт хумханса илнĕ пуç тăнĕ хусканнине пĕтерсе лартса, иккеленнĕ шухăшсем шăппăн пăшăлтатнине хупласа хурса, çав ĕненў çынсене хăпартлантарса йанă... Çынсем хăйсем тахçанах кĕтнĕ кăмăл-шухăша парăнма

васканă, вĕсем пĕр-пĕрне пăчăртса пĕр шухăшлă кĕлеткесенчен тем пысăкĕш купа тунă; тачă тăни, хулпуççисемпе айаксем çывăххи чĕресене ăшăтнă, тата ĕç ăнассине шанни те ăшă панă.

— Кирлĕ мар пире хĕрлĕ йалавсем!—тесе кăшкăрнă кукша пуçлă çын. Çĕлĕкĕпе сулкаласа вăл халăх пуçĕнче пынă, унăн çара пуç чашкийĕ тĕксĕмĕн çуталнă, çын куçĕсем умĕнче йарăна-йарăна хăй йеннеле пăхтарнă.

— Епĕр атте патне кайатпăр!..

— Мăшкăлама памĕ!..

— Йулташсем! Хĕрлĕ тĕс—пирĕн йун тĕсĕ,—тесе халăх çинче пĕр пĕччен уçă сасă кутăнлашса йанăраса тăнă.

— Хăй вăйĕсĕр пуçне, халăха ирĕке кăларакан урăх вăй çук,—тенĕ.

Кăмăлĕ-шухăшĕпе ӳсĕрĕлсе кайнă халăх, йулашкинчен кăмăлĕ килсе хыттăн ыталанăран хĕпĕртесе кайнăскер, харкашса тăнă.

— Кирлĕ мар!..

— «Вăл» ăнланĕ.

— Акă çын, ех есĕ...

— «Ун» патне йараççĕ пулсан...

— Халăха пăтрататакансем, шуйттансем!..

— Гапон атте хĕреспе, а вăл—йалавпа.
— Çамрăк-ха, çапах пуç пуласшăн...
— Епĕр килĕшӳлĕ тăвасшăн!

Сахалтарах ĕненнисем хыçалтарахра пырса çиленкелесе те хăракаласа кăшкăрнă.

— Хăвалăр ăна, йалавлине!—тенĕ.

Халђ хыттăн, ним иккеленмесĕр шунă, кашни утăм тумассеренех хăйсене хăйсем улталаса мухмăрне, пĕр кăмăллăхне тата хытăрах пĕр-пĕрне йертсе пынă. «Унăн» халђ анчах туса хунă сăнĕ ĕлĕк пулнă ырă паттăрсен мĕлкисене—ача чухне илтнĕ йумахсенчен кăшт тăрса йулнăскерсене хыттăн аса илтернĕ, çынсем ĕненме тăрăшнă чĕрĕ вăйпа тулса пынă та вĕсен пуçĕнче ним чарусăр ӳснĕ...

Тахăш пĕри:

— «Вăл» пире йуратаť!..—тесе кăшкăрнă.

Халăх çав хăй халђ анчах тунă йапала йуратнине чăнахах чĕререн ĕненнĕ.

Халăх урамран шыв хĕррине, Троицки кĕперĕ патне йухса тухса, хăйне кĕпер çине кĕме пӳлсе тăракан салтаксем хуçкаланчăк линипе чăсăлса тăнине курсассăн,—çынсем çав çӳхе, кăвак карта пирки чарăнса тăман. Кăвак-çутă сарлака çырмара лайăх курăнса

тăракан салтак фигурисенчен пĕрре те хăрамали пулман; шăннă урисене ăшăтмашкăн вĕсем сике-сике илнĕ, аллисене сулкаланă, пĕрне-пĕри тĕрте-тĕрте йанă. Малта, шывăн леш йенче çынсем пĕр тĕттĕм çурт курнă—унта вĕсене «вăл», хуçи кĕтнĕ. Аслă та вăйлăскер, ырă та йуратаканскер, вăл хăй салтаккисене: ман пата халăха, мана йуратаканскере, хăй нуши çинчен манпа килĕшӳлĕн калаçасшăнскере ан йаччăр, тесе хушма пултарайман ĕнтĕ.

Анчах, çапах та, нумай çын пичĕ çинче темскер тавçăрса илейменни палăрнă, малта пыраканĕсем вăрахăн утма тытăннă. Хăшĕ кайала çаврăнса пăхнă, хăшĕ айаккала кайса тăнă, пурте пĕр-пĕрне: салтаксем çинчен пĕлетпĕр, вăл пире тĕлĕнтермест, тесе кăтартасшăн пулнă. Хăшĕ çӳлте,хуйхăлă крепăç тĕлĕнче йăлтăртатакан ылтăн ангĕл çине пăхкаланă, хăшĕ кулкаланă. Такам сасси:

— Салтаксене сивĕ...—тесе шеллесе илнĕ.

— Н-да-а...

— Тăрасах пулаť!

— Салтаксем—йĕрке тытма...

— Лăпланăр, ачасем!... Лăп тăрăр!

— Ут, ут!...

— Урра, салтаксем!—тесе кăшкăрнă тахăшĕ.

Хулпуççинчен сарă пашлик çыхнă офицер йĕннинчен шашкине туртса кăларнă та, сывлăшра авăнчăк хурçипе сулласа, вăл та халăха хирĕç темскер кăшкăрнă. Салтаксем, хулпуççийе хулпуççи çумне туса, пĕр-пĕринпе йунашар пĕр хускалмасăр тăнă.

— Мĕн-ха вĕсем апла?—тесе ыйтнă пĕр самăр хĕрарăм.

Ăна хирĕç никам та чĕнмен. Пурне те темле, сасартăк утма йăвăр пулса ларнă.

— Кайала!—тесе офицер кăшкăрни илтĕннĕ.

Пĕр ик-виç çын кайала çаврăнса пăхнă—вĕсем хыçĕнче тăп тачă халăх тăнă, урамран ун ăшнеле хура етем шывĕ татти-сыпписĕр йухнă; халăх, вăл хĕстернине парăнса, кĕпер умĕнчи лаптăка тулса сарăлса кайнă. Пĕр ик-виç çын мала тухнă та, шурă тутăрсемпе сулса, офицера хирĕç утнă.

— Епĕр—хамăр патша патне...

— Пĕре те пăлханмастпăр...—тесе кăшкăрнă.

— Кайала! Епĕ пеме хушатăп!..

Офицер сасси халăх патне çитсен, халăх,

тĕлĕннипе, ăна хирĕç кĕр кĕрлесе йанă. Халăх хушшинче малтан та хăшĕ: «ун» патне йарас çук, тесе калакаланă, анчах «ун» патне лăпкăн, «унăн» вăйĕпе ырлăхне ĕненсе пыракан халăха пăшалпа пересси çав çынсем хăйсем тунă сăна пăсса йанă. «Вăл»—пур вăйран та аслă вăй, «унăн» никамран та хăрамали çук, «унăн» хăй халăхне штиксемпе те пуђăсемпе хăйĕнчен сивĕтме ниме те кирлĕ мар...

Выçă сăнлă, хура куçлă, вăрăм типшем çын тăрук çапла кăшкăрса йанă:

— Пересшĕн-и? Пеме пултараймастăн!..—тенĕ.

Унтан, халăх йеннеле çавăрăнса пăхса, çиленсе хыттăн каланă:

— Мĕн? Каларăм вĕт епĕ,—йарас çук вĕсем...

— Камсем? Салтаксем-и?

— Салтаксем мар, ав—лере...

Хăй таçта инçетеле аллипе сулса кăтартнă.

— Аслисем... Аха! Епĕ каларăм вĕт!

— Вăл паллă мар-ха халĕ...

— Мĕн тума пынине пĕлсессĕн—йарĕç!..

Шавлани вăйлансах пынă. Çиллĕн кăшкăрнисем, тăрăхласа каланисем илтĕннĕ. Чипер

пуç тăнĕ ниме кирлĕ мар картана тĕл пулса саланса кайнă та шарлами пулнă. Çынсем хытăрах кускаласа тăра пуçланă; çырмаран виттĕр сивĕ çапнă. Штик тăррисем пĕр тапранмасăр йăлтăртатса тăнă.

Пĕр-пĕрне чĕнкелесе, тата хыçалтан чышнине парăнса çынсем малала шунă. Тутăрсемпе кайнисем айаккала пăрăнса кĕрсе халăх хушшинче çухалнă. Анчах малтисем пурте—арçынсем, хĕрарăмсем, çитĕнейменнисем те—шурă тутăрсемпе сулланă.

Пĕр çулланнă çын, кăвакара пуçланă сухаллăскер, пысăккăн çапла каланă:

— Мĕн унта пăшалпа пемели? Мĕне кирлĕ вăл?—тенĕ.—Вĕсем кĕпер çине анчах йамаççĕ, тӳрех пăр çийĕпе кайăр, теççĕ...

Çавăнтах сасартăк сывлăшра темскер шăтăр-шатăр туса тăкăнса кайнă та йантраса илнĕ, халăха куçа курăнман темиçе теçетке пушăпа çапнă. Пĕр çеккунт хушши сасăсем сасартăк шăнса ларнă пек пулнă. Халăх хуллен малалах шунă.

Пĕр сăнсăр сасă, те ыйтса, те ахаљ:

— Пушшипе печĕç,—тенĕ.

Анчах унта та, кунта та йынăшнисем илтĕннĕ; халăх ури айĕнче темиçе çын выртнă.

Пĕр хĕрарăм, хыттăн ахлатса, аллипе кăкăрĕнчен йарса тытнă та малала, хăйне хирĕç тăсса тăракан штиксем патнеле хăвăрт утса кайнă. Ун хыççăн тата çынсем чупма пуçланă, унтан татах, ун тĕлĕпе ирте-ирте, умне чупса тухнă.

Унтан татах, тата хытăрах, тата тикĕс мартарах, харăс пăшал сасси шатăртаттарса йанă. Хўме патĕнче тăракансем хăмасем чĕтресе кайнине илтнĕ,—тахăшин курăнман-шăлĕсем хăмасене çиленсе çыртнă пек пулнă. Пĕр пуљкки тата, хўме хăми тăрăх шуçса кайса, çын пичĕсем çинеле вĕт турпас татăккисем силлесе тăкнă. Çынсем виçшерĕн, темиçешерĕн ана-ана ўкнĕ, хырăмĕсене йара-йара тытса çĕр çумне кукленсе ларнă, уксаклаcalled таçтала чупнă, йур çийĕпе упаленнĕ,—пур çĕрте те йур çинче çутă хĕрлĕ пăнчăсем пит нумай хыпса тухнă. Вĕсем сарăлнă, куçа хăйсем çинеле пăхтарса пăсланса тăнă. Халăх кайала чакнă, кăшт чарăнса тăнă та хытса кайнă, унтан сасартăк темиçе çĕр çын сасси тискеррĕн, çынна чĕтретмеле уласа йанă. Уланă сасă çуралнă та, хытă ыратнине, тавăрас килнине, хăраса ўкнине, хирĕç тăнине, нимне пĕлмесĕр хуйхăлă пулнине, пу-

лăшма чĕннине пĕлтерекен сасăсем пулса, сывлăш тăрăх вăйпа чĕтренсе пыракан татти-сыпписĕр ула пĕлĕт пек йухса қайнă.

Пуçĕсене чиксе, çынсем ушкăн-ушкăнăн малала, вилнисемпе аманнисене пуçтарма чупнă. Аманнисем те кăшкăрнă, чăмăрĕсемпе йунанă; пур çын пичĕ те сасартăк урăхланса кайнă, пур куçсенче те темле ухмаха йернĕ пеккийех йăлтăртатнă. Анчах пĕтĕм хура хăрушлăха кăтартакан панĕккă[1] пулман,—çынсене сасартăк тултан та, шалтан та йарса илекен, типĕ çулçăсене çил шăлса купаланă пек, çынсене куçа курăнман тетел ăшне шăлса кĕртсе тaçтала сĕтĕрекен, тата хăйсенчен хăйсем тарса пытанма тăрăшнă тискер çавра çил ăшĕнче таçта хăваласа, кайакан панĕккă пулман. Усал хăрушлăх пулнă, анчах вăл, сивĕскер, шăннă тимĕр пек пĕçертекенскер, чĕрене пăрлантарнă, ўт-пĕве пăчăртаса лартнă, йур çăтакан йун çине, йунланса пĕтнĕ питсем, алăсем, тумтирсем çине, тата, чĕррисем хăраса кускаласа çўренĕ хушăра, хăрамала канлĕн выртакан çын виллисем çине куçсене чарса пăрахса пăхтар-

[1] Панĕккă тесе çынсем нимĕне пĕлмесĕр, шутсăр хăраса ўкнине калаççĕ. *Куçаракансем.*

нă. Хыттăн тарăхса кайни, хуйхăлă-вăйсăр çилĕ, аптăранипе ытла ним тума пĕлменни палăрнă, темле пĕртте выљаман куçсем нумай пулнă, салхулăн усăнса аннă куçхаршисем, хытă чăмăртанă чăмăрсем, тытамак тытнă пек алă сулнисем, тата персе йанă хыт сăмахсем нумай пулнă. Анчах, пуринчен ытла, çын ăшĕсене чуна вĕлерекен сивĕ тĕлĕнтерӳ кĕрсе тулнăн туйăннă. Хăйсен каймали тĕлне лайăх курса, вĕсем кăшт пĕр ик-виç минут малтан анчах çăмăллăн утса пынă; вĕсем умĕнче патшан йумахри сăнĕ чаплăн курăнса тăнă, вĕсем ăна пăхса хĕпĕртенĕ, йуратса кайнă, унăн хăйсемех тунă илемне пăхса ӳсĕрĕлнипе чĕрисенче пит пысăк шанчăксем усранă. Икĕ хутчен харăс пăшал пени, йун, вилĕсем, йынăшнисем— вара çынсем пурте, вăйсăрскерсем, çурса пăрахнă чĕрелĕскерсем, тĕпсĕр, тĕксĕм пушă вырăн умне пырса тăнă.

Темле, татса пăрахма пулман йапалапа çыхса лартнă пек, çынсем пĕр вырăнта таптанса тăнă, хăшсем ним чĕнмесĕр, тем ĕç çинчен шухăшланă пек, аманнисене йатнă, вилĕсене пуçтарнă; ыттисем, тĕлĕк курнă пекех çав, анраса кайса темле, ним тума пĕл-

месĕр, лешсем ĕçленине пăхса тăнă. Нумайĕшĕ салтаксене кăшкăрса ӳпкеленĕ, вăрçнă, аллисемпе сулкаланă, çĕлĕкĕсене хыва-хыва тем тума пуççапнă, такамăн хăрушă çиллипе хăратнă.

Салтаксем, пăшалĕсене урисем çумне тăратса, пĕр тапранмасăр тăнă; пичĕсем те вĕсен тапранман, пит çăмарти тирĕсем хытă туртăнса ларнă, шăммисем ытла тухса кайнă. Пур салтаксен те куçĕсем шурă, тутисем шăнса çыпăçнă пек туйăннă...

Халăх хушшинче такам уланă пек хыттăн кăшкăрнă:

— Йăнăш! Йăнăш пулчĕ, тăвансем!.. Урăххисем вырăнне шутларĕç... Ан ĕненĕр!.. Кайар, тăвансем,—тăнлантарса парас пулать!.. Ех, турă... мĕн пулчĕ-ха ку?

— Гапон—ултавçă!—тесе çухăрнă пĕр ача, хунар çине хăпарса.

— Мĕнле, йулташсем, куратăр-и, йепле хирĕç тухса илеççĕ сире?..

— Тăр-хаљ, ку йăнăш! Апла пулма пултараймасть, тăнлан есĕ ăна! Ел есĕ етем мар?..

— Есĕр хăвăр ăна етем мар, есĕр сурăхсем, кĕтӳ, акă мĕнле сире...

— Ирттерсе йар... пăрăн...

— Çул пар аманнă çынна!..

Икĕ рабочипе хĕрарăм пĕр типсе кайнă вăрăм çынна çавăтса пынă; çынĕ пĕтĕмпех йурланса пĕтнĕ, пальто çанни ăшĕнчен йун йухнă. Пичĕ кăвакарса тата пушшех шĕвĕрĕлсе кайнă, хуралнă тутисем аран тапранкаласа хуллен çапла каланă:

— Епĕ каланăччĕ—йамаççĕ тесе... Вĕсем ăна пытарса усраççĕ,—мĕн вĕсене халăх!—тенĕ.

— Ачасем... утлă çар!

— Тарăр!

Салтак çтени хумханса, икĕ йеннеле уçăлакан йăвăç хапха пек уçăлса кайнă; ун хушшипе ташласа та харклатса лашасем иртсе тухнă та офицер кăшкăрни илтĕннĕ, утлă çар пуç тăрринче сывлăша çурса шашкăсем выльанса илнĕ, кĕмĕл лентăсем пек йăлтăртатса кайнă, пурте пĕр йеннеле хăмсарса йанă. Халăх ĕненмесĕр, мĕн пулассине кĕтсе, хумханса та шуйханса тăнă.

Сасăсем чарăна пуçланă.

— Ма-арш!—тесе шутсăр хытă кăшкăрса йани илтĕннĕ.

Çынсен питне çавра çил пырса çапăннă пек, урисем айĕнчи çĕр те çавăрăнса кайнă

пек, пурте тарма тытăннă, пĕр-пĕрне чыша-чыша ӳкернĕ, аманнисене пăраха-пăраха хăварнă, вилĕсем урлă сике-сике каçнă. Лашасен йăвăр ура сассисем хăваласа çите пуç-ланă, салтаксем уланă, вĕсен лашисем аманнисем, ӳкнисем, вилнисем урлă каçа-каçа кайнă, шашкăсем йăлтăртатнă, вăхăчĕпе хурçă шăхăрса илсе шăмă çумне çапăнни илтĕннĕ... Çынсем кăшкăрни вăрăмăн йантракан йынăшнă саса пулса тăнă...

— А-а-а!..

Салтаксем шашкисемпе хăмсарса вĕсене çын пуçтăррисем çинеле йанă, шашкăпа каснăçем вĕсен кĕлеткисем хăрах айаккинеле чалăшнă. Сăнĕсем вĕсен шыçса кайнă пек, хĕрлĕ, куççăр пулнă. Лашисем шăлĕсене пит хăрушла йере-йере пăрахнă та пуçĕсене сулла-сулла кĕçеннĕ...

Халăха урамсене хăваласа кӳртнĕ... Çавăнтах вара, лашасем тапăртатни инçете кайса çухалсанах, çынсем хашка-хашка чарăнса тăнă, чарăлса кайнă куççемпе пĕр-пĕрин çине пăхса илнĕ. Нумайĕшĕн пичĕсем çинче айăплăн кулса илни палăрнă, тахăшĕ кулса йанă та:

— Ну, тартăм та епĕ!..—тесе кăшкăрнă.

— Тарăн унта!..—тенĕ ăна хирĕç.

Çавăнтах сасартăк пур йенчен те тĕлĕнсе, хăраса, çиленсе калаписем сирпĕне пуçланă.

— Мĕн пулчĕ-ха ку, тăвансем, е?

— Вĕлереççĕ, православни халăх!

— Мĕншĕн?

— Акă правителствă те вара!

— Касаççĕ вĕт, е? Утсемпе таптаççĕ...

Нимне пĕлмесĕр пĕр вырăнта чышăнса тăнă, хăйсем çиленсе, тарăхса кайни çинчен пĕр-пĕринпе калаçнă. Мĕн тăвассине пĕлмен, никам та килеле уттарман, шухăшсем арăшпирĕшленсе кайнинчен темле çул уçса тухас тесе пулмала, кашнийех теприн çумне пăчăрăннă, тем çинчен пĕлесшĕн пулса пĕрпĕрне чăл-чал пăхкаланă, анчах—çапах та, хăранинчен ытла тĕлĕнсе кайнăскерсем—теме кĕтнĕ, итлекеленĕ, кайала çавăрăна-çавăрăна пăхнă. Тĕлĕннипе пурте ытла пĕтсе пусăрăнса ларнă, тĕлĕнни пур шухăшран та çӳлте тăнă; çак кĕтмен-туман, хăрушă та ăссăр, ниме кирлĕ мар минутсенче—айăпсăррисен йунĕ лайăххăнах çаптарса лартнă минутсенче—хăй йĕркиперех пыракан шухăшкăмăла та вăл пĕрлешме чарса тăнă...

Çамрăк, вăйлă сасă:

— Ей, аманнисене илме! Аманнисене пуçтарма кайăр!—тесе чĕннĕ.

Пурте хусканса кайнă, çырмана тухмали çĕреле хăвăрттăн уттарнă. Вĕсене хирĕç, урамала аманса пĕтнĕ çынĕсем, йур çийĕпе упаленсе, урисем çинче тайкаланса кĕнĕ, хăйсем йурпа йун ăшĕнче пулнă. Вĕсене алăсем çине хурса çĕкленĕ, извозчиксене чарса, ларса пыраканĕсене хăваласа антарнă та аманнисене таçта турттарса кайнă. Пурте ĕçлĕ пек, салху, чĕнми пулнă. Аманнисене куçпа виçнĕ пек пăха-пăха илнĕ, ним шарламасăр темскер виçнĕ, танаштарса пăхнă, хăйсен умне темле паллă мар, кĕлеткесĕр, хура мĕлке пек тухса тăракан хăрушă ыйтăва хирĕç мĕн калассине тарăна кайса шыранă... Çав ыйту хаљ анчах шухăшласа кăларнă геройăн, ырлăх паракан уçă кăмăллă патшан сăнне пĕтĕмпех хупласа пĕтерсе лартнă. Çав сăн пĕтсе ларни çинчен хăш-хăшĕ анчах сăмахпа калама хăйнă. Ун çинчен калама йăвăр пулнă,—апла калани вăл хăвăн пĕртен пĕр шанчăкна çухатни пулаť...

Хĕрлĕрех саплăклă паљто тăхăннă кукша пуçлă çын утса пынă: унăн тĕксĕм пуç чашкийĕ халĕ йунпа сăрланнă; вăл хулпуççипе

пуҫне усса йанӑ, урисем аран утнӑ. Ӑна кӑтра пуҫлӑ, ҫӗлӗксӗр, сарлака хулпуҫҫилӗ йӗкӗтпе ҫӗтсе пӑрахнӑ кӗрӗклӗ, сӳннӗ-вилӗ сӑнлӑ хӗрарӑм ҫавӑтса пынӑ.

— Чим-ха, Михаља,—йепле ӗнтӗ ку?—тесе мӑкӑртатнӑ аманнӑ сынӗ.—Халӑха пӑшалпа пеме йурамасӗ!.. Апла пулмала мар, Михаља,—тенӗ.

— Пулнӑ ҫав!—тесе кӑшкӑрчӗ йӗкӗчӗ.

— Печӗҫ те... Касрӗҫ...—тенӗ хуйхӑлӑн хӗрарӑмӗ.

— Апла пулсан, Михаља, пемешкӗн приказ пулнӑ...

— Пулнӑ ҫав!—тесе ҫиленсе кӑшкӑрнӑ йӗкӗчӗ.—Санпа калаҫса тӑраҫҫӗ тени есӗ? Пӗр стакан ерех тыттарӗҫ тени?

— Чим-ха, Михаља...

Аманнӑ ҫынӗ чарӑнса тӑнӑ та, ҫурӑмӗпе ҫтена ҫумне тайӑнса, хыттӑнтарах кӑшкӑрса йанӑ:

— Православнисем!.. Мӗншӗн пире вӗлереҫҫӗ? Мӗнле саккун тӑрӑх? Кам хушнипе?—тенӗ.

Ҫынсем пуҫӗсене усса ун тӗлӗпе ирте-ирте кайнӑ.

Тепӗр ҫӗрте, хӳме патӗнче кӗтесре темиҫе

теçетке çын пухăннă та вĕсем хушшинче такамăн хăвăрттăн тухакан, пăчлана-пăчлана ларакан сасси çиленсе йантрарă.

— Гапон ĕнер министăр патĕнче пулнă, вăл мĕн пулассине пурне те пĕлнĕ, апла пулсан—вăл пирĕн ултавçă,—вăл пире вилме илсе карĕ!

— Мĕн усси ăна?

— Епĕ пĕлетĕп-и мĕн?

Пур çĕрте те хумхану хыпса иле пуçланă, пурин умне те уçах мар ыйтусем сике-сике тухнă, анчах вĕсем пысăккине, тарăннине, хайаррине, вĕсем хирĕç ответ хыттăн ыйтнине кашнийех сиснĕ. Тултан пулăшассине ĕненни, нушаран хăватлăн хăтаракана шанни хумхану вучĕ ăшĕнче тата хăвăртрах çунса кĕлленсе пĕтнĕ.

Урам варрипе пĕр тулли ўтлĕ, начар тумлă, ырă амĕш сăнлă, хуйхăлă пысăк куçлă хĕрарăм пынă. Вăл йунланса пĕтнĕ сулахай аллине сылтăммипе тытса макăрнă та çапла каланă:

— Мĕнле ĕçлĕп? Ачасене мĕнле тăрантарас?.. Кама ман кайса ўпкелес?.. Православнисем, патша та хирĕç пыраť пулсассăн, ăçта-ши халăх хутне кĕрекенсем?—тенĕ.

Унăн уççăн та хыттăн каланă сăмаххисем çынсене вăратса хускатса йанă пек пулнă. Ун патне хăвăрт ута-ута пынă, пур йенчен те чупнă, чарăнса тăрса ун сăмаххисене салхулăн тăнласа итленĕ.

— Апла, халăх хутне кĕрекен саккун çук еппин?

Хăшсем йăвăррăн сывласа илнĕ. Ыттисем хуллен вăрçнă.

Таçтан хыттăн, çиленсе кăшкăрни илтĕнсе кайнă.

— Пулăшу илтĕм—ывăл урине ватрĕç... тенĕ.

— Петĕре вĕлерсех пăрахрĕç!..

Кăшкăрнисем нумай пулнă; вĕсем çынсене халхисенчен çапнă, час та час кайала йантраса тăракан сасăсем кăларса йанă та çав хытă сасăсем çынсен çиленес шухăшне вăратнă, вĕлерекенсенчен сыхланма кирли çинчен аса илтернĕ. Шуралса кайнă питсем çинче тем шухăш тытни палăра пуçланă.

— Йулташсем! Епĕр, çапах та, хулана кайăпăр... Тен, мĕн те пулин тăвăпăр... Айăр, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн!

— Вĕлерсе пĕтереççĕ...

— Тавай салтаксене калăпăр,—тен, вĕсем халăха вĕлерме саккун çуккине ăнланса илĕç.

— Тен, пур,—ăçтан епĕр пĕлетпĕр?

Халăх ушкăнĕ хуллен, анчах пĕр чарăнмасăр улшăнса, чăн-чăн халăх пулса кайнă. Çамрăксем пĕчĕк-пĕчĕк ушкăншарăн саланнă, вĕсем пурте пĕр йеннеле, каллех çырманала утнă. Пурте аманнисене, вилнисене йатнă; ăшă йун шăрши кĕнĕ, йынăшнисем, сăмахласа илнисем илтĕннĕ.

— Çимен Йаккуне лап çамкаран...

— Сăпаççипă патша-аттене!

— Çапла-а, хирĕç тухса илчĕ вăл!

Пĕр виç-тăват вирлĕ сăмах йантратса кайнă. Пĕр чĕрĕк сехет маларах çавăн пек пĕр сăмахне каланă пулсассăн та, халăх çыннине татса çурса пăрахнă пулĕччĕ.

Пĕр пĕчĕк хĕр ача чупса çӳресе пурне те:

— Аннене курмарăр-и?—тесе кăшкăрнă. Çынсем пĕр чĕнмесĕр çавăрăна-çавăрăна пăхнă та ăна çул панă.

Унтан çĕмрĕк алăлă хĕрарăм сасси:

— Кунта, кунта епĕ...—тенĕ.

Урам хушши пушанса пынă. Çамрăксем утнăçем хытăрах утса кайнă. Çулланнă çынсем те, çамрăккисем хыççăн куç айĕн пăхса,

таçта икшерĕн, виçшерĕп, васкамасăр, салхулăн утнă. Сахал калаçнă... Хăш чухне анчах, кам та пулин, ăшчик тăвăрланса çитнине тÿсеймесĕр, хуллен çапла каланă:

— Халăха айаккала тĕртсе йачĕç пулаĭ ĕнтĕ?..—тенĕ.

— Ылхану çиттĕр вĕсене, çын вĕлерекенсене!..

Вĕлернĕ çынĕсене шелленĕ, çавăн пекех тата пĕр йăвăр, чурала шухăш вилнине сиснĕ те ун çинчен шарламасăр тăнă; ăшри хуйхăпа çиле тапратас мар тесе, хăлхана чавакан йата та текех асăнман...

Теп тата, вйлни вырăнне урăххине туса йарасран хăранипе те, ун çинчен шарламан пулĕ...

...Патша пурнакан çурт йĕри-тавра салтаксем татти-сыпписĕр, çăт тачă цеп туса тăнă, дворец чÿречисем тĕлĕнче уçă лаптăка утлă çар вырнаçнă. Дворечĕ тавра утă, тислĕк, тата лаша тарĕ шăрши сарăлнă; шашкăсемпе шпорăсем чăнкăртатни, командă панă сасă, тата урасем тăпăртатни чÿречесем патĕнче илтĕнсе тăнă.

Тем чухлĕ çын, тарăхса хайарланса кайнă

темиçе вунă пин çын, пур йенчен те таччăн кĕпĕрленсе пырса, салтаксем çинеле чышăннă. Вăл çынсем лăпкăн калаçнă, анчах сăмаххисем темле ăраснах вирлĕнтерех тухнă,— çĕнĕ сăмахсемпе, çĕнĕ шанчăкпа калаçнă, тен çак çĕнĕ шанчăкĕ хăйсемшĕн та паллах пулайман пулĕ. Пĕр ротă салтак, хăрах флангĕпе çурт çтени çумне, теприпе йăвăç пахчин тимĕр решетки çумне тĕренсе, дворец патне лаптăка тухмали çула картласа илнĕ. Çак ротă патĕнчех, ăна хирĕç пите-питĕнех халăх тăнă,—ним шутсăр нумай, ним те шарламан хура халăх.

— Саланăр, хоспотасем!—тенĕ фелдфебĕл хуллентереххĕн.

Вăл фронт умĕпе утса, аллисемпе те хулпуççийĕпе тĕрткелесе, çынсене салтаксенчен сирнĕ; хăй пĕртте çынсен пичĕсем çинеле пăхасшăн пулман.

Çынсем унтан:

— Мĕншĕн есĕр пире йамастăр?—тесе ыйтнă.

— Ăçта?

— Патша патне!

Фелдфебĕл пĕр самантлăха чарăнса тăнă, хуйхăрнă майлăрах сасăпа кăшкăрса йанă:

— Калатăп вĕт епĕ сире—вăл çук тесе! — тенĕ.

— Патша çук-и?

— Ара, ну! Каланă сире—çук тесе, çавăнпа та—кайăр тетĕп!

— Вуçех çук-и вара патша?—тесе çинеçинех ыйтнă пĕр тăрăхлакан сасă.

Фелдфебĕл каллех чарăнса тăнă та аллине тăратнă.

— Кун пек сăмах каланăшăн... сыхлан!— тенĕ.

Унтан сассине урăхлатнă та:

— Халђ хулара мар вăл,—тесе ăнлантарса панă.

Халăх хушшинчен ăна хирĕç çакнашкал ответсем сирпĕннĕ:

— Ниçта та çук!

— Пĕтнĕ!..

— Персе вĕлернĕ есĕр ăна, шуйттансем!

— Есĕр халăха вĕлеретпĕр тесе шутларăр пулĕ?

— Халăха вĕлерсе пĕтерес çук!.. Вăл теме ваљљи те çитĕ...

— Есĕр патшана вĕлерсе пăрахрăр,—ăнланатăр-и çавна?

— Чакăр, хоспотасем! Ан калаçса тăрăр!

— Кам есĕ? Салтак-и? Салтак—кам вăл?

Тепĕр тĕлте тата шĕвĕр сухаллă старик хĕрсе кайсах тăнлантарнă салтаксене:

— Есĕр—çынсем, епĕр те—çынсем!—тенĕ.—Есĕр хаљ шинелсемпе, кайран—сăкмансем тăхăнăр. Ĕçлесшĕн пулăр, çиес килекен пулĕ. Ĕç çук, çимели те çук. Сирĕн те вара, аттемĕр, ак пирĕн пекех тумала пулĕ... Сире те апла пăшалпа пемеле пулат? Хăвăр выçă ларнăшăн вĕлермеле пулат сире, е?—тенĕ.

Салтаксене сивĕ пулнă. Вĕсем урисене сиктеркелесе тăнă, çĕр çумне ура кĕллисемпе çаптаркаланă, пăшалĕсене пĕр аларан тепĕр алла йара-йара тытса хăлхисене сăтăркаланă. Халăх хушшинче мĕн каланисене итлесе ассăн сывлакаланă, куçĕсене унтала-кунтала вылљаткаланă, шăннă тутисене пĕтĕркеленĕ. Шăнса кăвакарнă сăн-пичĕсене пăхсассăн, вĕсем пурте темле пĕр пек салхулă пулни, ним тума аптăрани, анкă-минкĕ йеверлĕрех пулса кайни палăрнă, куçĕсене мăљтмăљт сиктеркелесе, пытаркаласа пăхнă. Хăшпĕр салтакĕсем çеç, таçта теме пемешкĕн тĕлленĕ пек, куçĕсене хĕссе шăлĕсене хыттăн çырта-çырта лартнă,—çак халăх масси пирки шăнса тăма ўкнĕшĕн вĕсем хăйсен çиллине

аран-аран анчах шăнарса тăраççĕ пулас. Ку кăвак тумлă салтаксен кичемĕн курăнакан ĕретне ывăннă сăн, салху сăн çапнă.

Çынсем салтаксене хире-хирĕçех тăнă, хăйсене хыçалтисем тĕртнĕ пирки хутран-ситрен вĕсем салтаксем çинеле чышăннă.

— Хуллен!—тенĕ кăвак тумлă çын майĕпен кăна.

Хăшĕсем, салтаксене тем çинчен хĕрÿлĕн каласа, вĕсене алăсенчен йара-йара тытнă.

Салтакĕсем кусене куçĕсене мăч-мăч тутарса итленĕ, пит-куçĕсене темле нимĕ те пĕлмеле мар туса хуçкаланă, тата çавăнтах вĕсен сăнĕсем темле хăравçăла, мĕскĕнле пек курăна-курăна кайнă.

— Ан тив пăшала!—тенĕ пĕр салтакĕ лапсăркка калпаклă çамрăк ачана. Лешĕ салтака кăкăрĕнчен пÿрнипе тĕксе çапла каланă:

— Есĕ палач мар, салтак... Сана Раççейе тăшмансенчен сыхламашкăн илнĕ, анчах сана халăх çинеле пăшалпа пертересшĕн... Тăнла! Халăх—вăл Раççей пулаť те ĕнтĕ!—тенĕ.

— Епĕр—пеместпĕр!—тенĕ салтакĕ.

— Пăх—акă Раççей тăраť, Раççей халăхĕ! Вăл хăйĕн патшине курасшăн...

Такам ун сăмахне пўлсе:

— Курасшăн мар!—тесе кăшкăрса йанă.

— Халăх хăй ĕçĕсем пирки патшапа калаçасшăн пулнинче мĕн лайăх марри пур-ха унта? Ну, кала, е?

— Пĕлместĕп епĕ!—тенĕ салтак, сурчăкне сурса пăрахса.

— Пире калаçма хушман...—тенĕ унпа йунашар тăракан салтакĕ.

Ассăн сывласа илсе куçĕсене çĕреле пăхтарнă.

Пĕр салтакĕ тата хăй умĕнчи çынран сасартăках çемçен çапла ыйтнă:

— Çемљак, Ресен кĕпĕрнисем мар-и есĕ?—тенĕ.

— Псков кĕпĕрнинчен... Мĕн калас тетĕн?

— Ахаљ... Епĕ—Ресен кĕпĕрнисем...

Салтак вара, йăл кулса йарса, шăннă майпа хулпуççисене чĕтретсе илнĕ.

Кăвак тĕслĕ тикĕс çтена пек тăракан салтаксем умĕнче çынсем чўкенмелех чўкеннĕ, шыв хумĕсем çыран хĕрринчи чулсем çинеле çапăннă пек, вĕсем çав çтена çинеле пырапыра тăраннă. Кайала чака-чака кайнă, унтан каллех малала чышăна-чышăна килнĕ. Хăйсем кунта мĕншĕн килнине, хăйсене мĕн

кирлине, хăйсем мĕне кĕтнине ăнланаканнисем нумайах та пулман пулĕ. Хăйсем ăçтала тĕл тытнине лайăх пĕлсе тăни, хăйсем чăннипе мĕн тума шутласа лартни паллă пулман. Хăйсене кӳрентернĕ, тарăхтарнă пирки чунĕсем ыратнă, нумайĕшĕн тата—тавăрас кăмăл пулнă; çавă ĕнтĕ пурне те пĕрле çыхăнтарса урамра тăратнă, анчах çав хăйсен чунĕсем ыратнăшăн никама тивме, никама тавăрма та пулман... Салтакĕсем çилентермен, тарăхтарман—вĕсем, шăнса хытнăскерсем, анăрасем, мĕскĕнсем çеç пулнă; чылайĕшĕ хăйсен çанçурăмĕ чĕтренине нийепле те чарайман, сиксе чĕтренĕ, шăлĕсемпе шартлаттарнă.

— Иртенпе тăвата сехетренпе тăратпăр!—тенĕ вĕсем.—Аптăрамала капла!

— Вырт та—вил...

— Кайасчĕ сирĕн, е? Епĕр те вара ăшă çĕре, казармасене кайаттăмăр...

— Мĕн чухлĕ вăхăт халђ?

Икĕ сехет патнеле пулнă.

— Мĕн есĕр пăшăрханатăр? Мĕн кĕтетĕр?—тенĕ фелдфебĕл.

Унăн сăмаххисем, патмар сăн-пичĕ, тата хăй ним кулмасăр-тумасăр, витĕмлĕ калаçни

çынсене сивĕте-сивĕте йанă. Вăл мĕн каланинче пуринче те ăраснах хăйне уйрăм шухăш, унăн ахаљ сăмаххисенчен таранрах шухăш пур пекле туйăннă.

— Ним кĕтсе тăма та кирлĕ мар!..Çарăн çеç сирĕн пирки хĕн курма лекет...

— Пирĕн çийеле пăшал перетĕр-и?—тесе ыйтнă унран пашлик тăхăннă пĕр çамрăк çын.

Фелдфебĕл кăшт чĕнмесĕр тăнă та лăпкăн кăна:

— Хушсассăн—перетпĕр!—тенĕ.

Çавна илтсен тӳрех ӳпкевлĕ сăмахсем, йатлаçса илнисем, мăшкăласа кулнисем кĕрлесе кайнă.

— Мĕншĕн? Мĕншĕн пемеле?—тесе пуринчен те хытăрах кăшкăрнă пĕр хĕрлĕ сухаллă вăрăм çын.

— Начаљниксем каланисене итлеместĕр!—тесе тăнлантарнă фелдфебĕл, хăлхисене сăтăркаласа.

Салтаксем, халăх калаçнине итлесе, куçĕсене салхулăн мăч-мăч тутаркаланă. Пĕри хуллен:

— Халь мĕн те пулин вĕри йапала кирлĕччĕ!..—тенĕ.

— Ман йун—кирлĕ мар-и сана?—тесе ыйтнă унран тахăшин çилĕлĕ, хурлăхлă сасси.

Салтак кўреннĕ пек пулнă та:

— Епĕ—çвер мар!—тенĕ салху сасăпа.

Вăрăм лини туса тăрса тухнă салтаксен сарлака та лапчăк пичĕ çинеле тем чухлĕ куç пăхнă,—сиввĕн, ним чĕнмесĕр интересленсе, тата кураймасăр, йĕрĕнсе пăхса тăнă. Анчах чылайĕшĕ хăйсем хĕрсе кайнă вут-хĕм ăшшипе салтаксене ăшăтса йама хăтланнă, казарма пит хытă хĕссе лартнă салтак чĕрисенче, тата каçуннăй словеснăçа вĕренсе темтепĕр çўпçаппа тултарнă салтак пуçĕсенче темне хускаткалама хăтланнă. Чылайĕшĕ мĕн те пулин тăвасшăн, хăйсен кăмăлĕсемпе шухăшĕсене йепле те пулин пурнăçа кĕртесшĕн пулнă,—вĕсем çак сивĕ кăвак чулсем çинеле чăкăлташсах пыра-пыра çапăннă, чулĕсем мĕн пурĕ те пĕр йапалашăн—хăйсен ўчĕсене ăшăтасшăн çеç çуннă.

Сăмахсем йантăранăçем хĕрўлĕрех йантăранă, сирпĕннĕçем уçăмлăрах сирпĕннĕ.

— Салтаксем!—тенĕ пысăк сухаллă та кăвак куçлă патвар арçын.—Камсем есĕр? Есĕр Раççей халăхĕн ачисем. Чухăна тухрĕ халăх,

манăçа йулчĕ вăл, хӳтĕсĕр, ĕççĕр, çăкăрсăр тăрса йулчĕ. Акă вăл пайан патшаран пулăшу ыйтма тухрĕ, анчах патша сире пирĕн çинеле пеме, пире вĕлерме хушаҫ. Салтаксем! Халăх—сирĕн аçăрсемпе тăванăрсем—пĕр хăйсемшĕн çеç мар, сирĕншĕн те тăрăшаççĕ. Сире халăха хирĕç кăларса тăратаççĕ, аçăрсене, тăванăрсене вĕлерме хăвалаççĕ. Шухăшлăр-ха! Есĕр хăвăра хирĕç кайнине тăнланмастăр-и вара?—тенĕ.

Çак лăпкăн та тикĕссĕн йухакан сасă, аван сăн-пит, сухалри кăвак пĕрчĕсем, çыннăн пĕтĕм сăнсăпачĕ, тата унăн ăнланма çăмăл тĕрĕс сăмаххисем салтаксен кăмăлĕсене хускатса йачĕ курăнаҫ. Вăл пăхнă чух куçĕсене çĕреле пăхтарса, вĕсем вăл каланине лайăх итленĕ; хăшĕ-хăшĕ, пуçне сулласа, ассăн сывла-сывла илнĕ, ыттисем куç-харшисене хĕскеленĕ, хыçалала çаврăнкаласа пăхнă, тахăшĕ тата хуллентерех каласа канаш панă:

— Чак шалала—офицер илтет!—тенĕ.

Пысăк уссилĕ вăрăм сарă офицер фронт умĕпе йерипен утса пынă, сылтăм аллине перчетке тăхăнтартса шăл виттĕр çапла каланă:

— Са-лан!.. Си-рĕлĕр айаккала! Мĕн? Ка-

лаç-ха ытларах,—епĕ сана калаçтарам!..—тенĕ.

Пичĕ хăйĕн самăр, хĕрлĕ, куçĕсем çавракa, çутăскерсем, анчах йăлтăртатмаççĕ. Вăл, урисене çĕр çине тĕреклĕн çаптартса пырса,васкамасăр утнă; вăл килсессĕн вăхăт хăвăртрах шума тапратнă,—темскер кӳрентерекен, йĕрĕнмеле йапала тулса ларасран хăранă пек, кашни çеккунтах часрах иртсе кайса çухалмашкăн васканă темеле. Ун хыççăн куçа курăнман линейкă тăсăлса пырса салтаксен фронтне тикĕслетнĕ темеле; вĕсем хырăмĕсене пăчăрта-пăчăрта лартнă, кăкăрĕсене каçăртнă, аттисен пуçĕсене пăха-пăха илнĕ. Хăшĕ-хăшĕсем — куçĕсене хĕссе — çынсене офицер çинеле тĕллеттерсе пăхтарнă, çиленчĕк питсем тăва-тăва кăтартнă. Фланга çитсе чарăнса:

— Смирно-о!—тесе кăшкăрнă офицер.

Салтаксем хусканса илнĕ те тăпах пулса тăнă.

— Саланма хушатăп!—тенĕ те офицер, васкамасăр йĕнĕрен шашкине кăларнă.

Саланмашкăн нийепле те май килмен: пĕчĕк лаптăка халăх лăках тулнă, урамран тата, халăх хыçне, татах та татах çынсем тулнă.

Вĕсем офицер çине кураймасăр пăхнă; ун хăлхине хăйĕнчен мăшкăласа кулнисем, хăйне вăрçнисем пыра-пыра кĕнĕ, анчах вăл, çавсене илтсен те, пĕр хусканмасăр, çирĕппĕн тăнă. Ротăна вăл вилĕ пек куçсемпе пăха-пăха илнĕ, куçхаршийĕсем кăшт çеç тапранкаланă. Халăх шавланă; офицер пĕртте етемле марри, вăл çакăн пек вăхăтра та кăлт та хусканманни ăна тарăхтарнă.

— Ку—пемешкĕн командă пама пултармаласкер.

— Вăл командă памасăр та турама хатĕр...

— Куратни, туртса кăларчĕ хай çелЂоткине...

— Ей, улпут! Вĕлерме—хатĕр-и?

Ашкăнса тăрăхласси вăйланса пынă, ним çинчен шухăшламасăр, нимле шанчăк тытмасăр иртĕхсе саттурланасси килнĕ; кăшкăрнă сасăсем вирлĕнтерех тухма пуçланă.

Фелдфебĕл офицер çинеле пăхса йанă, шарт сиксе илнĕ, кăвакарса кайнă, вара вăл та часрах шашкине туртса кăларнă.

Тўттўрўт сасси сасартăк пит усаллăн йантрама тапратрĕ. Халăх горнист çинеле пăхнă—питçăмартисене лешĕ темле ытлах та

тĕлĕнмеле хăпартса йанă, куçне-пуçне чарса пăрахнă, ун аллинчи тӳттӳрӳт чĕтренечĕтрене ытла нумайччен каланă. Сăмсан кăшкăрнă пек тухакан пăхăр тӳттӳрӳт сассине çынсем хыттăн шăхăра-шăхăра уласа йанисем, çухăрнисем хупласа лартнă,—çынсем ылхана-ылхана йатлаçнă, ӳпкелешнĕ, хăйсем вăйсăррипе хурлăхлăн йынăша-йынăша илнĕ; çитес самантрах хăйсем вилме пултарассине, тата вилĕмрен хăтăлса йулма май çуккине сиссе, ним тума пĕлмесĕр, пĕтĕм чун хавалĕпе харсăрланса çухăрнă. Вилĕмрен ниçта та тарса çăлăнма май килмен. Хура тăхăннă темиçе çын часрах çĕр çине тăсăлатăсăла выртнă; хăшĕсем пичĕсене аллисемпе хупласа тытнă; мăн сухаллă пĕр çынĕ тата çавăнтах паљтоне йӳле йанă та, салтаксем çинеле кăвак куçĕсемпе пăхса лартса, пуринчен малта тăнă. Салтаксене тем каланă вăл, пĕрмай каланă, анчах унта-кунтах ним майсăр кăшкăрнăран, вăл мĕн калани илтĕнмен.

Салтаксем пăшалĕсене ывтăнтарса илнĕ те пеме тĕлленĕ,—халăх патнеле штикĕсене тăсса пурте сыхă, пурте пĕр йеверлĕ шат хытсапăрланса кайнă пек тăнă.

Сывлăшра штиксен линийĕ пĕр тикĕс тухманни куçа курăннă—хăшпĕр штикĕсем ытла пит çӳлеле хăпарса тăнă, хăшĕсем çĕреле тайăлнă хăш-хăшĕсем çеç çынсене тӳрех лап кăкăрĕсенчен тĕлленĕ, пурте вĕсем çемçескерсем пек туйăннă, чĕтренĕ, ирĕлсе пĕтессĕнех туйăнса кайнă, авăнкаланă.

Тахăш пĕри сехĕрленсе те йĕрĕнсе хыттăн çухăрса янă:

— Мĕн тăватăр есĕр апла? Çын вĕлерекенсем!—тенĕ.

Штиксем хыттăн, кăр-кар чĕтренсе илнĕ, салтаксем пăшалсене хăранă пекле кĕрĕслеттерсе янă; пуљăсем шăхăрса пырса çапăннипе, тата вилнисемпе аманнисем çĕреле пере-пере аннипе çынсем кайала сулăнса кайнă. Хăш-хăшĕсем ним шарламасăр сат решетки урлă сике-сике каçма тапратнă. Татах пăшалсем шатăртаттарса янă... Унтан тата тепре.

Пĕр ача, сат решетки тăррине хăпарса çитсен пуљă пырса тивнĕскер, сасартăк хуçланса аннă та, урисене çӳлеле тăратса, çаплипех çакăнса ларнă. Елкем-вăшка çӳçлĕ йаштака вăрăм хĕрарăм хуллен ахлатса йанă та çав ача патне йерипен кăна анса ӳкнĕ.

— Ылхан ҫитменскерсем!..—тесе кăшкăрнă тахăшĕ.

Ирĕкленсерех те лăплансарах кайнă. Кайра тăраканĕсем урамсене, килхушшинеле тара-тара кĕнĕ; халăх пĕрне пĕри тĕртнипе кайала йăвăррăн чакса пынă. Салтаксемпе халăх хушшинче темиҫе чалăш сарлакĕш уҫă вырăн пулса тăнă; ку уҫă вырăнта пĕтĕм талкăшпех етем кĕлеткисем выртнă. Вĕсенчен хăшпĕрисем ура ҫине тăрса халăх патнеле хăвăрт чупа-чупа кайнă, теприсем аранаран ҫеҫ тăркаланă та хăйсем хыҫҫăн йун паллисем хăварнă; кусем те сулăнкаласа таҫтала сăнклетнĕ, хыҫалтан йун йухса пынă. Нумай ҫын тата пичĕсемпе ҫӳлеле пăхса та, ӳппĕн те, хăйаккăн та выртнă; кусем пурте, вилĕм йарса тытнă ӳчĕсем вилĕм аллинчен туртăнса хăтăлма хăтланнă пекех, темле карăнса тăсăлса выртнă...

Халăх ахлата-ахлата кайала чакнă; ылханнисем, вăрҫа-вăрҫа илнисем, ыратнипе ҫухăра-ҫухăра йанисем шăхăрнисемпе, ухлатнисемпе, тата йынăшнисемпе пĕрле хутăш ҫĕмĕрĕлсе ҫеҫ тăнă; салтакĕсем тĕреклĕн тăнă, вилнĕ ҫынсем пекех, ним те хускалман вĕсем. Пичĕсем кусен тĕксĕмленнĕ, тутисене

хыттăн пăчăртса хĕстерсе лартнă,—ку çынсем те пурте кăшкăрасшăн, шăхăрасшăн пекех туйăннă, анчах вĕсем хăйайман, хăйсене хăйсем чарса тăнă пек туйăннă. Вĕсем, куçĕсене хытă чарса пăрахса, тӳрех хăйсем умнеле пăхса тăнă, паçăрхин пек ёнтĕ куçĕсене мăлђт-мăлђт тутарман. Кун пек пăхнинче ним те етемле майĕ пулман,—вĕсем, тăсăкла кăвак питсем çинчи çак пушанса йулнă тĕксĕм пăнчăсем, нимех те курман пек пулнă. Курасшăн мар вĕсем—тен, хăйсем тăкнă ăшă йуна курсан, татах та йун тăкас килекен пуласран ăшĕсенче хăранă пулĕ. Аллисенче пăшалĕсем чĕтренĕ, штик тăррисем кисреннĕ, вĕсем сывлăша шăтарнăн туйăннă. Çынсем тĕмсĕлсе антраса кайнă пек пулнине çав салтаксен тăлпăвĕ чĕтрени те сирсе йарайман,—ирĕкне пусмăрлани çынсен чĕрисене сӳнтерсе лартнă, пуç мимийĕсене йĕрĕнмеле çĕрĕк ултавпала хыттăн хупласа хунă. Мăн сухаллă, кăвак куçлă çын çĕр çумĕнчен хăпартланса тăнă та, пĕтĕмпе чĕтрекелесе, каллех макăрнă пек сасăпа калама тапратнă.

— Мана—вĕлерейĕмерĕç. Мĕншĕн тесен, епĕ сире чăн тĕрĕслĕхне каларăм...—тенĕ.

Халăх, вилнисемпе аманнисене пуçтара-

пуçтара, каллех хуллен те салхулăн малала шуса пынă. Пĕр виç-тăват çын, çав салтаксене калаканĕпе йунашар чарăнса тăнă та, унăн сăмахне пӳле-пӳлех, ним çиленмесĕр-тумасăр, хуйхăрса, асапланса кăшкăрнă, ӳкĕтленĕ. Сассисенче хаљ те акă тĕрĕс сăмах çĕнтерсе илессине айванла ĕненни сисĕннĕ, ун пек усаллăн хăтланни ниме кирлĕ маррине, вăл ăссăрла йапала иккенне кăтартса парас килнĕ, тата пит пысăк йăнăш туние чухласа илтерме тăрăшни палăрнă. Салтаксем ирĕксĕр пулсан та çавнашкал хăтланни ытла та намăсла, йĕрĕнчĕкле йапала пулса тăнă; ку виç-тăват çынĕ çавăн çинчен салтаксене тăна кĕртесшĕн пулнă, тăна кĕртме тăрăшнă вĕсем...

Офицер йĕнĕ ăшĕнчен револьвĕр кăларнă, ăна лайăххăн пăхкаласа илнĕ те çак çынсем патнеле утнă. Ту çинчен хуллен йăванса аннакан чулран çынсем йепле васкамасăр пăрăнаççĕ, кусем те офицертен çавăн пекех васкамасăр айаккала пăрăннă. Мăн сухаллă, кăвак куçлă çын вырăнтан тапранман, офицера пăхса хыттăн ӳпкеле-ӳпкеле каланă, йĕри-таврари йун çинеле аллипе сара-сара кăтартнă.

— Кун пек хăтланнăшăн мĕн каласа тӳрре тухас, шутлăр-ха? Нимпе те тӳрре тухмалли çук! — тенĕ.

Офицер ун умне пырса тăнă, куçхаршисене тем пит шухăшлă çын пек хĕссе лартнă, аллине тăсса йанă. Пенĕ сасси илтĕнмен, тĕтĕмĕ кăна курăннă, — вăл çак çын вĕлерекенĕн аллине пĕр хут, иккĕмĕш хут, унтан тата тепĕр хут хупăрласа илнĕ. Виççĕмĕш хучĕ хыççăн çыннин урисем кукленсе кайнă, сылтăм аллине сулласа илсе, вăл кайала тайăлса кайса ӳкнĕ. Çын вĕлерекенĕ патне пур йенчен те чупса пынă, — вăл шашкипе хăмсарса чакма тапратнă, пурин çинеле те хăйĕн револьвĕрне чыша-чыша тĕлленĕ... Пĕр темле ача ун умне анса ӳкнĕ, офицер ăна хырăмĕнчен шашкăпа тăрăнтарнă. Мĕкĕрнĕ сасăпа кăшкăрнă, чăхăмçă лаша пек, пур йеннеле те сике-сике илнĕ. Тахăшĕ ăна питĕнчен çĕлĕкпе пенĕ, ун çинеле йунланнă йур чăмаккисем ывăтнă. Штикĕсене малала тĕллесе тытса, ун патне фельдфебĕлпе темиçе салтак чупса пынă, — тапăпаканĕсем вара тарса пĕтнĕ. Çĕнтерекенĕ вĕсем хыççăн шашкипе йунанă, унтан шашкине сасартăк çĕреле сулса йанă та хăй урисем патĕнче йун

йухтарса упаленекен ачана тата тепĕр хӳт тирнĕ.

Тӳттӳрӳт каллех сăмса виттĕр кăшкăртнă пек кăшкăртса йанă. Çынсем çав сасса илтсе лаптăкран хăвăрт тасала пуçланă; тӳттӳрӳт сасси çинçен кăна чĕлтĕртетнĕ, сывлăшра вăл салтаксен тăхлан куçĕсене, офицер паттăрлăхне, унăн хĕп-хĕрлĕ вĕçлĕ шашкине, арăш-пирĕшленсе кайнă уссине ӳкерес ĕçе туса пĕтерне темеле...

Чĕп-чĕрĕ çеç хĕрлĕ йун тĕсĕ куçсене йăмăхтарса хăй патнеле туртнă, ӳсĕртсе-çилентерсе йарса хăйне тата нумайтарах, хăйне пур çĕрте те куртарас килтернĕ. Салтаксем темле сасартăк, теме кĕтнĕ пек хатĕрленсе тăнă, мăйĕсене тапраткаланă, хăйсен пуђккисемпе тивретмешкĕн тата чĕрĕ йапала çук-ши тесе, куçĕсемпе пăхкаласа шыранă пек туйăннă...

Офицер флангра тăнă, шашкипе сулласулла, сăмахсене пăтăртаттарса, темскер çиллĕн те тискеррĕн кăшкăрнă.

Ăна хирĕç унтан-кунтанах:

— Палач!

— Мерзавец!—тесе кăшкăрнисем илтĕннĕ.

Офицер хăйĕн уссисене йусакалама тытăннă.

Пăшалсемпе тепре кĕрĕслеттерсе йанă, унтан тата тепре...

Михĕсене тырă чышса тултарнă пекех, урамсене тăп-туллийех халăх чышăнса ларнă. Кунта рабочисем сахалтарах, вак сутуçăсем, служăшчисем ытларах пулнă. Ку çынсем хушшинчен хăшĕсем йунпа вилĕсене курса килнĕ те ĕнтĕ, хăшĕсене полици тытса хĕненĕ. Килтен урама вĕсем темскер хăрамали сас-пăса илтсе тухнă; вĕсем акă, çак кунăн тулашĕнчи сехĕрлĕхне ытлашши ӳстере-ӳстере йарса, çав хăрамали сас-пăса пур çĕре те сарнă. Арçынсемпе хĕрарăмсем, ачасем— пурте темрен шикленкелесе унтала-кунтала çавăрăна-çавăрăна пăхнă, тинкерсе итлекеленĕ, тем пуласса кĕтнĕ. Çынсене вĕлернисем çинчен пĕр-пĕрне кала-кала кăтартнă, ахлатнă, вăрçнă, хыттăнах аманман рабочисенчен ыйта-ыйта пĕлнĕ, хутран-ситрен пăшăлтатсах калаçма тапратнă, вара пĕр-пĕрне темскер вăрттăн йапала çинчен темчченех каласа тăнă. Никам та пĕлмен мĕн тумалине, никам та киле кайакан пулман. Çав вĕлерӳсем

ырра пĕлтерменнине туйса-чухласа илнĕ; ҫав темиҫе ҫĕр йут ҫынна вĕлерни-амантнинчен те пысăкрах ĕҫ, хăйсене тата хăватлăрах пырса тивекен, тата трагедилĕрех йапала килсе тухасса сиссе илнĕ пек пулнă.

Ҫак кунччен вĕсем ытлашши ним ҫинчен те шутламасăр пекех пурăннă; влаҫ, саккун, пуҫлăхсем ҫинчен, тата хăйсен прависем ҫинчен тĕшмĕрткелесе ҫеҫ, хăйсем сисмесĕрех тахҫан тепле пулса кайнă шухăшсемпе кăна пурăннă. Ҫак шухăшсем хурмăланса ҫитеймен пулсан та, вĕсем ҫапах та ҫынсен пуҫ мимине ҫăра-тачă карапах карса илнĕ, шуҫкалакан хулăм хыт хуппипе хупласа хунă,— пурнăҫра хăйсен хутне кĕрекен, хăйсене хӳтĕлесе тăма пултаракан пĕр вăй пур, саккун пур тесе шухăшлама хăнăхнă ҫынсем. Ҫавăн пек хăнăхни шикленмесĕр пурăнма шанчăк парса тăнă, канлĕ мар шухăшсем аптăратасран сыхланă. Ун пек хăнăхупа пурăнмашкăн начарах пулман; пурнăҫ ҫынна унтан та кунтан пĕчĕккĕн тире-тире, чăрмала-чăрмала, чыша-чыша илнĕ пулин те, хăшпĕр чух тата ҫаб тĕтрелĕ шухăшсене хыттăнах тиверте-тиверте илнĕ пулин те, вăл тĕтрелĕ шухăшсем ҫапах та ҫирĕпскерсем, ҫыпăҫаканскер-

сем пулнă, вилĕ халлĕн аплипех тăнă; çурăксем, чăрмаланă вырăнсем пурте хăвăртах çĕнĕрен тӳрлене-тӳрлене ларнă.

Çак кун вара пуç мими сасартăках çаралса кайнă, чĕтренсе илнĕ, ăша темскер хăратса тăнă, сивĕ çапнă. Тăрăлса ларса çитни, хăнăхнă йапала пурте ӳплешсе кайнă, çĕмĕрĕлнĕ, куç умĕнчен çухалнă. Ним намăса пĕлмен, права, саккун таврашне ним те пăхман тискер вăйа кура пурте хăйсене хăйсем хуйха ӳкнĕ пек, ытлах та пат пĕччен, пĕр хӳтĕсĕр тăрса йулнă пек пулнă. Етем пурнăçĕсем пурте çав вăй аллинче тăнă, етемсен масси хушшине вăл вăй ним шутламасăр-тумасăрах вилĕм йама пултарнă, чĕррисене хăй мĕнле пĕтерес тенĕ, тата хăй мĕн чухлĕ пĕтерес тенĕ, çавăн пек пĕтерме пултарнă. Никам та ăна тытса чарма пултарайман. Никампа та вăл калаçасшăн пулман. Вăл тем те тума пултарнă; ăссăрла хăтланса хула урамĕсене вилĕсемпе тултарса, йун йухтарса, вăл хăйĕн ним виçесĕр влаçĕ пуррине лăпкăнах кăтартнă. Унăн йун ĕçме йуратакан ăссăрла йонтарчăкĕ аванах палăрса тăнă. Çавă пурне те пĕр харăсах шутсăр пит шиклентернĕ, хытă хăратнă. Пуç тăнне çавă çине-çине тăрсах

чĕр сывлăш вĕре-вĕре кĕртнĕ, ирĕксĕрех ăна етеме çĕнĕ майлă хӳтĕлемели, пурнăça сыхламашкăн çĕнĕ крепăçсем лартмали плансем тутарттарнă.

Пуçне çĕреле усса, йунланса пĕтнĕ аллисене сулкаласа, пĕр темле кĕрнеклĕ, пăлатна çын утса пынă. Паљто умĕ унăн çара йун пекех пулнă.

— Есĕр аманни мĕн?—тесе ыйтнă унран.

— Çук.

— Йунĕ ăçтан лекнĕ тата?

— Ман йун мар вăл!—тенĕ çынĕ чарăнмасăрах. Унтан сасартăк чарăнса тăнă, кайала çавăрăнса пăхнă та темле тĕлĕнмеле хыттăн калаçма тапратнă.

— Ку ман йун мар, хоспотасем, — çав ĕненсе пурăннисен йунĕ вăл!..—тенĕ.

Сăмахне каласа пĕтермесĕрех, каллех пуçне чиксе малала утнă.

Нухаљасемпе хăмсарса, халăх хушшине утлă çар отречĕ пырса кĕнĕ. Кусенчен пур йеннеле те тара-тара ӳкнĕ, пĕрне-пĕри таптанă, çтенасем çине хăпара-хăпара кайнă. Салтакĕсем ӳсĕр пулнă; йĕнерĕсем çинче тайăлкаласа, вĕсем ухмахла кулкаланă; хушăран, ӳркенкеленĕ пекле, çынсене пуçсемпе

хулпуççисенчен нуха.ђасемпе хĕненĕ. Çапса ыраттарнă пĕр çынĕ çĕре анса ӳкнĕ, унтан çавăнтах ура çине сиксе тăнă та:

— Ма çапрăн? Е-ех есĕ, çвер!—тесе калачă.

Салтак хулпуççи хыçĕнчен винтовкине хăвăртах йарса илнĕ те, лашине тăратмасăрах, çав çынна тĕллесе пенĕ. Çынĕ каллех кайса ӳкнĕ. Салтак кулса йанă.

— Мĕн хăтланаççĕ?—тесе хăраса йарса кăшкăрнă пĕр лайăх тумланнă хисеплĕ хосподин; хăй сехри хăпнăран улăшăннă пичĕпе пур йеннеле те çавăрăна-çавăрăна пăхнă.— Хоспотасем! Куратăр-и есĕр!—тенĕ.

Сасăсем хусканса кайса сĕрлесе шавлани татти-сыпписĕр илтĕнсе тăнă; хăраса асапланнă хушăра, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр хăраса ирттернĕ вăхăтра пĕр йапала çуралнă; вилĕмрен чĕрĕлсе тухнă, ĕçлеме хăнăхман, пĕлмен шухăша çав йапала сисмеле мар хуллен-хулленех пĕр çĕреле пуçтарса пынă.

Анчах килĕшӳ кӳме йуратакан çынĕсем те тупăннă.

— Ара, мĕншĕн вăл вăрçса тăкрĕ-ха салтака?

— Салтакĕ—çапнă ăна!

— Унăн пăрăнмала пулнă!

Урамран шаларах кĕрсе тăракан хапха умĕнче икĕ хĕрарăмпа пĕр студент рабочин аманнă аллине çыхнă; унăн алли виттĕр пуљă тухса кайнă. Рабочи, йĕри-таврала салхулăн пăхкаласа илсе, ыратнипе питне-куçне хĕскеленĕ. Хăй тавра тăракан çынсене вăл çапла каланă:

— Нимле вăрттăн шухăш тытасси те пулман пирĕн, кун çинчен пĕр киревсĕр усал çынсемпе сышчиксем çеç каласçĕ. Епĕр ним пытанмасăрах пынă. Епĕр мĕн пирки пынине министăрсем пĕлнĕ, вĕсем патĕнче пирĕн петицин копписем пур. Каласчĕ хăй усалсен—йурамасть, ан кайăр тесе. Пире ăна каламалăх вăхăт пулнă,—епĕр пĕр пайан анчах тăрук хатĕрленсе тухман... Епĕр кайассине полици те, министăрсем те—пурте пĕлнĕ. Вăрă-хурахсем...

Пĕр типшемрех кăна кăвак çӳçлĕ старик, шухăшларах парса, ним кулмасăрах:

— Мĕн ыйтнăччĕ есĕр?—тенĕ.

— Халăх хушшинчен суйланă çынсене патша чĕнсе илтĕр те ĕçсене чиновниксемпе мар, çав çынсемпе пĕрле канашласа туса тă-

тăр тесе ыйтнăччĕ. Йухăнтарса йачĕç Расçейе, сволăчсем, çаратрĕç пурне те.

— Чăнахах та... контролþ кирлех вăл!— тенĕ старик.

Рабочин суранне çыхса пĕтернĕ, тумтир çаннине хуллен антарса лартнă.

— Сăпаççипă, хоспотасем! Каларăм епĕ йулташсене—пустуй кайатпăр! Ним толкки те пулмасĭ терĕм... Хаљ ĕнтĕ паллă пулчĕ вăл.

Рабочи хăйĕн аллине паљто тӳммисем хушшине асăрханкаласа хуллен чикнĕ те васкамасăр айаккала утнă.

— Илтетĕр-и, мĕнле калаççĕ вĕсем? Ку ĕнтĕ, ачам...

— Н-да-а... Анчах, çапах та, етемсене кунашкал вĕлерттерни...

— Пайан—ăна, ыран—мана та вĕлерме пултараççĕ...

— Н-да-а...

Тепĕр вырăнта хĕрсе кайсах тавлашнă.

— Вăл пĕлмест те пулĕ!

— Апла—мĕн тума-ха вăл?

Çапах та, вилнĕскере чĕртме хăтланакан çынсем ĕнтĕ сайра çеç тĕл пулнă, питех палăрман вĕсем. Вилнĕ сăна тепĕр хут чĕртме

хăтланнипе вăл çынсем ыттисене çилентернĕ. Кусене тăшмана тапăннă пекех тапăна-тапăна илнĕ, кусем вара хăраса ӳкнипе часрах айаккала пăраха-пăраха тарнă.

Урама артиллери батарейĕ пырса кĕнĕ; çынсене вăл хĕстерсех лартнă. Салтакĕсем, шухăша кайнă пек хăйсем умнеле, çын пуçĕсем урлă малала пăха-пăха лартса, лашасемпе тĕнĕлсем çинче ларса пынă. Халăх, кусене çул парса, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр пăчăрăннă, салхува кайса ним те шарламан. Ут таврашĕсем чăнкăртатнă, йешчĕксем кĕмсĕртетнĕ; тупăсем, хӳрисене пăркаласа, çĕре шăршланă пекех, айалала пит тинкерсе пăхнă. Ку батарейă килсе кĕни çын пытарма кайнă чухнехи пекех туйăннă.

Таçта шатăртаттарса персе йани илтĕнсе кайнă. Çынсем çавăнтах хытса кайнă пек пулса тăнă, сас-пăс илтĕнессине итленĕ.

Тахăшĕ хуллен кăна:

— Татах переççĕ!..—тенĕ.

Урамра вара сасартăках сас-чӳсем хускалса-чĕрĕлсе кайнă.

— Ăçта? Ăçта?

— Утравра... Ваçилйĕвски утравĕнче...

— Илтетри есĕр?

— Чăнах-и?

— Тупата! Хĕçпăшал магазинне йарса илнĕ...

— Охо?

— Телеграф йуписене каса-каса ӳкернĕ, баррикадă туса лартнă...

— Н-да-а... Акă йепле?

— Йышлăн-и вĕсем?

— Йышлăн!

— Ех, ним айăпсăр çынсен йунне тăкнăшăн тавăрасчĕ хăй!..

— Аҫăр унта!

— Иван Иванч, кайăпăр, е?

— Н-да-а... Ку йапала, пĕлетĕр-и...

Халăх тĕлне çӳле пĕр етем кĕлетки тухса тăнă, унăн сасси вара тĕттĕмре уççăн йантраса кайнă:

— Кам ирĕклĕхшĕн çапăçасшăн? Кам халăхшăн, кам етемĕн пурăнмали тивĕçĕпе ĕçлемели правишĕн кĕрешесшĕн? Кам малашнехи пурнăçшăн çапăçса вилес тет—пире пулăшма килĕр!

Пĕрисем ун патнеле кайнă, урам варринче вара етемсем пĕр çĕреле таччăн пуçтарăнса тăнă; теприсем васкасах таçта айаккала шунă.

— Куратăр пуљ, халăх йепле тарăхса кайнă.

— Тивĕçлĕрен çав, тивĕçлĕрен!

— Ăсран тухса иртĕнессисем пулаççех ĕнтĕ... ай-ай-ай!

Çынсем каçхи тĕттĕмре хуллен-хулленех курăнми пулса куçран çухалса пĕтнĕ, килсенеле саланнă, хăйсем халиччен курман шиклĕхпеле шикленсе тавăраннă; хăрамала пат пĕччен тăрса йулнă пек туйăннă вĕсене; хăйсен пурнăçĕнчи драмăна, хăйсен пурнăçĕ вăл—чурасен ним правасăр, ухмахла пурнăçĕ иккенне кăшт чухласа илнĕ пек пулнă... унтан тата хăйсене мĕн усăлă пек, мĕн аван пек пулать, çавăнпа пуринпе те майлашса пурăнма хатĕр пулнă...

Урамра хăрушă пула пуçланă. Çынсем хушшинчи çыхăнăва, тулашĕнчи интерес тĕлĕшĕнчен çынсем пăртак пĕрле çыхăнса тăнине каçхи тĕттĕм пĕтерсе хунă. Камăн ăшра вут-кăвар çук, çавăн пек çынсем пурте хăйсен пĕрре хăнăхса çитнĕ кĕтессисене часрах тарса кĕме васканă.

Тĕттĕмленсех пынă. Çапах та хăйçутисем çутăлман...

— Драгунсем!—тесе кăшкăрса йанă пĕр урмăш сасă.

Урам кĕтесси хыçĕнчен сасартăк утлă çарăн пĕр пĕчĕкçеç отречĕ сиксе тухнă; учĕсем темиçе çеккунт хушши хăйаймасăрла пĕр вырăнта тăпăртаттарса тăнă, вара сасартăках çынсем çинеле вĕçтерсе кĕрсе кайнă. Салтакĕсем темле уласа, çухăрса йанă; темскер, етем сасси пек марри, тĕттĕмле, суккăрла вăйхăват, тата темле, ĕмĕт татăлса хурланнă йевĕрлĕ йапала сисĕннĕ вĕсен сассинче. Тĕттĕмре çынсем те, лашасем те пĕчĕкреххĕн, хурараххăн курăннă. Шашкăсем çуттăнах йăлтăртатман, кăшкăрни-тунисем сахалтарах пулнă, çапнă сасăсем ытларах илтĕннĕ.

— Йулташсем! Мĕн алла лекнĕ, çавăнпа парăр вĕсене! Йун тăкнăшăн йун тăкăнтăр,—перĕр лайăхрах!

— Чуп!..

— Ан çулăх, салтак! Епĕ саншăн мушик мар!

— Йулташсем, чулсемпе парăр!

Хура пĕчĕк çын кĕлеткисене тӳнтере-тӳнтере пăрахса, лашасем тапа-тапа сикнĕ, кĕçеннĕ, хартлатнă; хурçă сасси, командă пани илтĕннĕ.

— От-делени...

Тăрпа васкаса та чĕтренсе кăшкăртнă. Пĕрпĕрне чыша-чыша çынсем чупнă, ана-ана ӳкнĕ. Урам хушши пушанса пынă, урам варринче хура тĕмесем туха-туха ларнă, таçта айаккарахра, урам кĕтессипе çавăрăнса кайнă çĕрте, лашасем хăвăрттăн та йăвăррăн тăпăртаттарни илтĕннĕ...

— Есĕр аманни мĕн, йулташ?

— Хăлхана касса татрĕç... пулмала...

— Мĕн тума пулаттă-ха пушă алăпа?

Таçта пăшалсем пени пушă урамала йанкăрса килнĕ.

— Ывăнса çитмен иккен,—шуйттансем!

Шăпах. Вăрт-вăрт васкаса утни илтĕннĕ. Темле пит тĕлĕнмеле пек,—çак урамра сас-пăссем сахал, никам та çӳремест. Хулана тинĕс шывĕ йухса кĕнĕ пекех, пур йенчен те нӳрлĕ шав кĕрлесе килнĕ.

Таçта çывăхрах тĕттĕмре хуллен йынăшни илтĕнкеленĕ... Тахăш-пĕри хыттăн хашкаса, йăвăррăн сывласа чупнă.

— Мĕн, аманним ес?.. Йакку?—тесе хăракаласа ыйтнă йулташĕ.

— Тăхта-ха, ним те мар!—тенĕ ăна хирĕç урмăш сасă.

Драгунсем кайса йанă урам кĕтессинчен каллех халăх сиксе тухнă та пĕтĕм урам талкăшпех çăп-çăра хура шыв пек йухса пынă. Пĕри, тĕттĕмре халăхран татăлмасăр чи малта пыраканни, çапла каланă:

— Пайан пиртен йун кăларсах опесатĕлства илчĕç—пайантан малашне пирĕн граждăнсем пулмала,—тенĕ.

Ĕсĕклесе илсе, ăна тепри пӳлсе лартнă:

— Çапла, пирĕн аттесем хăйсем мĕнлине кăтартса пачĕç!

Тахăшĕ тата çапла йунаса каланă:

— Манмастпăр епĕр ку куна!—тенĕ.

Тачă ушкăнпа хăвăрттăн утса пынă, сăмахсене нумайĕшĕ пĕр харăс кала-кала йанă; сасăсем, ним йĕркесĕр пĕрлешĕнсе, тĕттĕмри салхулă шав пулса кайнă. Хутран-ситрен хăшĕ-пĕри, кăшкăрнă чухнехи майлах сассине вăйлатса йарса, пĕр самантлăха пурне те хупласа лартнă.

— Мĕн чухлĕ çын пĕтерчĕç!

— Мĕншĕн?

— Çук! Епĕр манма пултараймастпăр ку куна!..

Пĕр çĕте пуçланă урмăш сасă, малала

мĕн пуласса пĕлсе каланă пекех, айакран усаллăн кăна йантраса илнĕ.

— Манса кайатăр, чурасем! Мĕн вăл сирĕншĕн—йут çын йунĕ?

— Ан шарла, Йакку...

Тата тĕттĕмрех, тӳлекрех пулса кайнă. Çынсем çав саса йеннеле çавăрăна-çавăрăна пăхса, мăкăртатса утнă.

Çуртран чӳрече виттĕр урамала сарă çутă ӳкнĕ. Çутă ӳкнĕ вырăнта хунар патĕнче икĕ çын курăннă. Пĕри çĕр çинче хунар йупи çумне çурăмĕпе сĕвĕнсе ларнă, тепри ун патнеле пĕшкĕннĕ, ăна тăратасшăн пулмала. Вĕсенчен тахăшĕ-пĕри каллех пит уççăнах мар, хурлăхлăн:

— Чурасем...—тенĕ.

---

Отв. редактор *С. Фомин.*
Техредактор *Н. Янгас.*

Послано в производство 31-XII—35 г.
Подписано к печати 9-III — 36 г.

Упол. Чувашлита № 1529.
Заказ № 06. Чувашгиз
№ 325. Об'ем 2 п. л.
Инд. X—2. Тираж 5000.
Формат бум. 62×94/32.

г. Чебоксары, у. Канашская, № 16.
Типография № 1 Чувашгосиздата.

★

Цена 25 к.
Перепл. 20 к.

МАКСИМ ГОРЬКИЙ

# 9-е ЯНВАРЯ

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

ЧУВАШГИЗ ♦ 1936